Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

56 (7910) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи июль (утă) уйăхĕн 23-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Суту-илӳ ĕçченĕсен кунĕ



## Чунĕпе парăннă

*Çак сăн ӳкерчĕкре эсир Алина Александровна Огадеровăна куратăр. Вăл Мăн Сĕнтĕр райповĕн лавккинче вăй хурать. Çамрăк сутуçă чунĕпе парăннă ĕçре ответлăха туйса тăрăшать. Мĕн ачаллах çакăн пек ĕçе кăмăлланăскер, аслă ĕçтешĕсен опытне ăша хывса тавар туянакан ыйтăвне туллин тивĕçтерет. Ăна кунта асли те, кĕçĕнни те хисеплет, малашне вара Алина Александровнăна татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума сĕнетпĕр, уяв ячĕпе саламлатпăр.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**

**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**ХИСЕПЛĔ СУТУ-ИЛӲ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире пурне те Суту-илӳ ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Сирĕн ĕçĕр халăхăн пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Тавар туянакансен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе ырми-канми тăрăшатăр. Çулсеренех эсир паракан пулăшусен шучĕ те, пахалăхĕ те ӳссех пырать. Сирĕн пархатарлă ĕçĕр районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне лайăхлатасси çине витĕм кӳрет.

Эсир малашне те умри йывăрлăхсене пăхмасăр çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвасса, республикăри тата Раççей шайĕнчи тĕрлĕ конкурссенче малта пуласса шанас килет.

Пурсăра та çирĕп сывлăх, ăнăçупа пуçарулăх, вăрăм кун-çул, телей сунатăп.

**В. КАЛИНИН,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене туса пыраканĕ.**

Раççейре

## Наци ĕçĕсен пĕлтерĕшĕ пысăк

***Путин Пĕтĕм Раççей халăх фронтĕнче наци ĕçĕсен платформине, правительствăра вара унăн ведомствине йĕркелет***

Пĕтĕм Раççей халăх фрончĕн лидерĕ Владимир Путин ытлари кун тĕн тата общество организацийĕсен представителĕсемпе тĕл пулнă. «Раççейре нацисем хушшинчи хирĕç тăрусем пулмалла мар,– тенĕ Путин.– Ун пекки пулас пулсан вара çакă çĕр-шыв малашлăхĕшĕн питех те тӳнтер витĕм кӳрĕ.

Путин çапла пĕлтернĕ. Çывăх вăхăтрах правительство аппаратĕнче çакăн йышши проблемăсене татса парассипе ятарлă структура туса хума пăхнă. Раççее ытти çĕртен пурăнма килекенсем саккунпа тата обществăлла мораль тĕлĕшпе хӳтлĕхе тивĕç. Анчах та хăйсен те çĕнĕ вырăнти йăла-йĕркесене, чĕлхипе культурине хисеплемелле. «Пурте вĕсем хăйсене Раççейăн тулли правăллă гражданĕсем пек туйччăр»,– пĕлтернĕ Путин.

Раççей – нумай нациллĕ çĕр-шыв. Унăн территорийĕнче 180 халăхпа этнос пурăнать. Пурин те вĕсен пĕр çĕр-шыв кăна – Раççей. Çавăнпа та нацисем хушшинчи хутшăнусене тĕрĕс йĕркелесе пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

«Эпир пухăннă çак площадкăн – Пĕтĕм Раççей халăх фрончĕн – тивĕçĕ халăхсен наци хутшăнăвĕсен ыйтăвĕсене пур енлĕн курса тăрса пурин ыйтăвĕсене те шута илсе кашниншĕнех юрăхлă татса парасси пулса тăрать»,– палăртнă Путин.

**«REGNUM» информаци агентстви.**

Республикăра

## Раççей ăмăртăвĕ – Чăваш çĕрĕ çинче

Июлĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарти «Олимпийский» стадионта Раççейри çăмăл атлетика чемпионачĕ уçăлчĕ. Çĕр-шыври чи пĕлтерĕшлĕ ăмăртăва 66 регионти тата Узбекистанри 800 ытла спортсмен килсе çитнĕ. Вĕсен йышĕнче тĕнче шайĕнче палăрнисем те, пысăк спортра малтанхи утăмсене тăвакансем те пур.

Ăмăртура Чăваш енĕн чи хастар 26 спортсменĕ те старта тухать.

Августра Корея çĕр-шывĕнче иртекен тĕнче чемпионатне хăш спортсменсем хутшăнасси шăпах Раççей чемпионатĕнчи кăтартусенчен килет. Чăваш спортсменĕсем те Раççейĕн пĕрлештернĕ командине кĕме пултарасса шанатпăр.

## Çĕр ĕçĕ кулленхи тимлĕх ыйтать

Канашлу

Утă уйăхĕн 20-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусем ирттермелли пысăк залĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе тата ял тăрăхĕсенче «Раççей Федерацийĕн уйрăм саккун акчĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» Федераллă Саккуна пăхса тухассипе анлă канашлу иртрĕ. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ 169-мĕш номерлĕ саккуна пăхса тухма, пурнăçа кĕрекен çĕнĕлĕхсемпе паллашма ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем тата вырăнсенче çак çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртессипе ĕçлекен специалистсем хутшăнчĕç.

Асăннă кун районта пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Çавна май канашлу ĕçне Чăваш Республикипе ĕçлекен «Кадастр палати» федераллă бюджет учрежденийĕн директорĕн çумĕпе Н.Н. Александровăпа пĕрле Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕн ертӳçин çумĕ А.Н. Кузьминов хутшăнчĕ.

Алексей Николаевич пухăннисене республикăра выльăх апачĕ хатĕрлессипе тата вырмана хатĕрленессипе ĕçсем епле пыни çинчен каласа пачĕ. Унăн сăмахĕнче ĕç тата пушар хăрушсăрлăхĕ, вĕсене пăхăнассипе туса ирттермелли ĕçсем тĕп вырăнта пулчĕç. «Пушартан сыхланассипе ăнлантару ĕçĕсем ирттересси ял тăрăхĕсен ĕçĕнче кулленех малти вырăнта пулмалла. Шыва кĕнĕ чух асăрханулла пуласси пирки те ял çыннисене пĕлтерсех тăмалла», – терĕ вăл республикăра пулнă инкексемпе паллаштарнă май.

Хальхи вăхăтра ял тăрăхĕсенче çĕр хуçисене палăртса хăварассипе тата вĕсене çирĕплетсе парассипе ĕçсем пыраççĕ. Нина Николаевна Александрова шăпах çак ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ. Вăл канашлăва пухăннисене малтанах çĕр участокĕсем йĕркелеме пуçламăш документсем тăратнă чухнехи ыйтусем çинчен туллин каласа пачĕ. Хăй каланисене тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ.

Кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтура калаçу çĕр участокĕсене патшалăх кадастр учетне тăратма администрацисен архивĕсенчен документсем хатĕрлесе парасси çинчен пулчĕ.

Семинар-канашлу калаçу йĕркипе иртрĕ. Хăйсене хумхантаракан ыйтусене ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе вырăнсенчи специалистсем нумай çĕклерĕç. Кашни ыйтăвĕ пĕлтерĕшлĕ пулин те пурин çине те тулли хурав пулчĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Саламлатпăр



Хаклă та юратнă аннене, кукама, мамака – Малиновка ялĕнче пурăнакан **Мария Васильевна КОСТИНĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Тавах сана ыра кăмăлушăн, чун ăшшине пире панăшăн. Сывлăху çирĕп пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан татăлтăр, ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем.**



Юратнă аннене, кăмăллă асаннене, хисеплĕ тăвана – Отаркка ялĕнче пурăнакан **Лидия Гурьевна ГУРЬЕВĂНА** 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн хисеплесе ăшшăн саламлатпăр.

Çурма тăлăха юлнă 4 ачана та, хăв çуратнисене 5-шне те пĕр-пĕринчен уйăрмасăр пăхса çитĕнтернĕшĕн сана, анне, çĕре çити пуç таятпăр. Сывлăху сан нихăçан та ан иксĕлтĕр, ачусемпе, мăнукусемпе яланах килĕштерсе, савăнса пурăнмалла пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан татăлтăр. Турри сана вăрăм кун-çул пиллетĕр.

**Саламлаканĕсем: 4 ывăлĕпе 5 кинĕ, 4 хĕрĕпе 4 кĕрӳшĕ, 20 мăнукĕ, 8 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсемпе хăти-тăхлачисем.**

Савнă мăшăра, юратнă аттене, хисеплĕ тăвана – Сарчак ялĕнче пурăнакан **Александр Никитич ВОЛКОВА** 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн ыталаса, хĕрӳллĕн çупăрласа чаплă юбилейпа чун-чĕререн саламлатпăр. Тавах сана ыра кăмăлушăн, чун ăшшине пире панăшăн. Сывлăху çирĕп пултăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан нихăçан та ан татăлтăр, ачусен, мăнуксен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем, тăхлачисем, кӳршисем.**

## Ача амăшĕн капиталĕпе усă курса

Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ

***РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхне О.Н. АЛЕКСЕЕВĂНА районта, çавăн пекех танлаштарса пăхма республикăра та çак вăхăта ача амăшĕн капиталĕпе усă курасси епле пулса пыни пирки каласа пама ыйтрăмăр.***

Муркаш районĕнчи 270 çемье, республикипе вара 10 пин ытла çемье ача амăшĕн капиталĕпе усă курма ĕлкĕрнĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма тата ачасене вĕрентме Пенси фончĕ 2009 çултан тытăнса 3 миллиард тенкĕ ытла уйăрнă. Районта та, республикăра та ытларахăшĕ ача амăшĕн капиталĕн укçи-тенкипе çурт-йĕр, хваттер туянма илнĕ кредитсене саплаштарма усă курма тăрăшать. Ача миçе çултине пăхмасăрах районĕпе çак тĕллевпе 227 çемье 59,3 миллион тенкĕ, республикипе 9 пин ытла çемье 2,8 миллиард тенкĕ уйăрнă.

Районти 39 çемье вара (республикипе 1000 çемье ытла) ача 3 çул тултарсан пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă. Районта çурт-йĕр туянма 19 заявлени йышăннă, республикипе – 758 заявлени. Пая кĕрсе çурт-йĕр тума республикипе 41 заявлени панă, строительство организацине тара тытса харпăр хăйĕн çуртне тума республикипе – 11 заявлени.

Халĕ ача амăшĕн капиталĕпе усă курса çурт-йĕр тунă е реконструкциленĕ чухне ятарлă строительство организацине йышăнмасан та юрать. Туса пĕтернĕ çурт-йĕршĕн кайнă тăкаксене саплаштарма та юрать. Ку тĕлĕшпе 2010 çулхи декабрь уйăхĕнче законодательствăна улшăнусем кĕртнĕ. Çулталăк пуçланнăранпа районĕпе 10 (республикипе 178) çын çурт-йĕр тума, 6 çын (110) реконструкци ĕçĕсене пурнăçлама подрядчик тытма килĕшмен. Районĕпе 4-ăн (республикипе 91) туса пĕтернĕ çуртшăн кайнă тăкаксене саплаштарма заявленисем çырса панă.

Ача амăшĕн капиталĕпе ачисене вĕрентес текенсем те çук мар. 4 çемье ачисене аслă вĕренӳ заведенийĕсенче, колледжсенче тата техникумсенче вĕрентнĕшĕн 135,9 пин тенкĕ уйăрнă. Ача амăшĕн капиталне амăшĕн пухăнакан пенсийĕ валли хывас текенсем хальлĕхе çук.

Тӳрĕ лини

## Ыйтусем кĕтетпĕр

**Хаçатра тӳрĕ линисем ирттересси çĕнĕлĕх мар. Ку хутĕнче ăна ытларахăшне паян хумхантаракан, канăçсăрлантаракан темăпа – пурăнмалли çурт-йĕр строительствин, коммуналлă услугăсемпе тата çăмăллăхсемпе тивĕçтерессин ыйтăвĕсемпе йĕркелес терĕмĕр. Калаçăва вара район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхне В.Г. НИКИТИНА чĕнтĕмĕр. Çавна май вулакансенчен асăннă темăсемпе ыйтусем кĕтетпĕр. 62-2-82 номерпе редакцие шăнкăравласа пĕлтерме те пулать, редакцие хăвăр кĕрсе тухсан та аван. Çывăх вăхăтрах вара вĕсене Владимир Германович хаçат урлă хуравлĕ.**

Çырăнтару

**Хаклă вулакансем!**

**Райхаçата август уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтараççĕ. Çыхăну уйрăмĕн ĕçченĕсемпе тĕл пулма васкăр.**

# Кил тата хушма хуçалăх



## Кăткăсем пĕтеççĕ

Пахчара кăткă ĕрчесе кайни нумай канăçсăрлантарать. Вĕсенчен хăтăлма хытăрах çĕпре илсе çаврашкасем туса пахчана хурса тухмалла. Кăшт чавса е çиеле хурсан та юрать. Кăшт вăхăтран кăткăсем пĕтеççĕ.

# Фермăра та, килте те хастар

Ял хĕрарăмĕ



*– Çĕннине тăтăш вĕренмеллине, ыранхи куна пăхса ĕçлемеллине, малашлăхшăн тăрăшмаллине пирĕнтен пурнăç ыйтать. Çакна эпир хамăр çинче туятпăр. Районăн, Чăваш Республикин тата Раççей Федерацийĕн экономикине малалла уттарасси пĕрлехи тивĕç пулнине ăнланатпăр, – терĕ кĕске калаçура Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн Уйкас Янасалти сĕт ферминче 19 çул ĕнесене машинăпа сăвакан Светлана Леонидовна Федорова оператор. Тăрăшуллă ĕçчен коллективра ырă ятлă. Фермăри ĕçчен хĕрарăм килти хушма хуçалăхра та алă усса лармасть. Ĕне, вăкăр, 5 сурăхпа 2 сысна, нумай чăх-чĕппе хур-кăвакал тытакан çемьен ларса тăма вăхăт та çук. Мăшăрĕпе Михаил Евстафьевичпа вĕсем икĕ ача ỹстереççĕ. «6 ачаллă çемьере ỹснĕрен ĕç тĕлне ачаллах тĕллерĕм. Килти хушма хуçалăхри пур ĕçрен те хăрамасăрах ỹснĕ эпир. Ачамсене те çавнах вĕрентес тетĕп», – пĕлтерчĕ ĕне сума тухнă Светлана ашшĕ-амăшĕ вăхăтра 2-шер ĕне тытни, хур-кăвакал нумай усрани, сыснасем çăвăрлаттарса пасара çура сутма çỹрени çинчен каласа панă май.*

**А. БЕЛОВ сăн ỹкерчĕкĕ.**

Усă курма сĕнетпĕр

## Дайкон

Дайкон тĕрлĕ апат-çимĕç хатĕрлеме витаминсемпе пуян паха ỹсен-тăран шутланать. Ăна пахчари хăш-пĕр йăран пушансан июль вĕçĕнче е август пуçламăшĕнче лартма юрăхлă. Иртерех ларт-сан вара çимĕç хытать е чечеке каять. Ку ỹсен-тăран кăпка çĕре кăмăл-лать, ăна валли йăрана çỹллĕрех тумалла. Унăн вăррисем шултăра, пĕр-пĕрин хушшине 4–6 сантиметр хăварса акмалла, лайăх шăвармалла. Эрне хушшинче калча шăтса тухать. Август уйăхĕнче ăна сиен кỹрекен хурт-кăпшанкă çук, çанталăк условийĕ те аван. Дайкона нỹрĕк ытларах кирлĕ, çумăр çуман вăхăтра тăтăш шăвармалла.

Сентябрь вĕçнелле çимĕç тăпраран çỹлелле тухма пуçлать. Хĕвел çутипе вара симĕсленет, кукăрлать. Ăна йăпăлка хурт тапăнма пултарать. Çавăнпа та ку ỹсен-тăрана тăпрапа купаламалла. Дайкон кăшт кăна сивĕне те чăтаймасть. Çапах та вăл мĕн чухлĕ ытларах çĕр ăшĕнче ларать, çавăн чухлĕ аванрах упранать. Çимĕç тухăçĕ октябрь çурринче 2 килограмм таякан пулать, 30 сантиметр тăршшĕне çитет. Çанталăк сивĕтме пуçласан ăна михĕпе витни те ытлашши мар. Типĕ çанталăкра кăларнă çимĕçе нỹхрепре хăйăр ăшĕнче 0 – 2 градусра упрамалла.

Вырăнăх усракана

## Ỹт-тир чирĕнчен хỹтĕлеме

Ял çыннисене çакна калас килет. Çу кунĕсенче те выльăх кĕлеткин тасалăхĕнчен унăн сывлăхĕпе сĕт пахалăхĕ нумай килет. Çавăнпа та ĕне тасалăхĕ çине куллен тимлĕх уйăрма ан манăр.

Тирне тасатни ĕнешĕн массаж вырăннех. Вăл тир парĕсене, сывлав çулĕсене, юн çỹрессине, япаласен ылмашăвне лайăхлатать, сывлăхне çирĕплетет.

Ĕне тирне тасатма щеткăпа е улăм çыххипе усă курăр. Малтан пуçĕнчен тасатма тытăнăр, хыççăн – мăйне, кĕлеткине, урисене. Вараланнă вырăнсене ăшă шывпа çăвăр, шăлса типĕтĕр.

Тасатас ĕçе уçă çĕрте пурнăçлăр. Хыççăн выльăх кĕлеткине нỹрĕ татăкпа шăлса илĕр.

Тасату ĕçĕсене ĕнене сăвас умĕн 1 сехет маларах е сунă хыççăн пурнăçлăр. Унсăрăн çăм тата тусан вĕçсе сĕте варалама пултарать. Выльăха тирĕ типĕ чухне тасатма сĕнетĕп. Хỹрине, кĕлеткен кайри пайне уйрăмах тĕплĕ тасатас пулать.

Пĕрмаях тасатса тăни выльăх кĕлеткине çирĕплетет. Çакă выльăха тĕрлĕ ỹт-тир чирĕнчен хỹтĕлет.

**В. ИЛЬИН, выльăх тухтăрĕ.**

Ан ỹркенĕр

## Салат: томат ăшĕнчи хăяр

1 литрлă 7–8 банка валли: 5 кг хăяр; çур литр томат пасти тата çур литр томат соусĕ (соуспа пастăна аш арманĕ витĕр кăларнă хуппинчен тасатнă помидорпа та улăштарма пулать, унта тăвар, пăрăç хушмалла, 40 минут пĕçерсе илмелле); 200 мл 9 процентлă уксус кислоти; 200 г сахăр; 3 апат кашăкĕ шултра тăвар; 200 мл тип çу; 1 л шыв; 10 шт ырă шăршлă пăрăç; 10 шт хура пăрăç; килĕштеретĕр пулсан 10 шт гвоздика.

Хăяра лайăх çуса çур сантиметр хулăнăш çаврашкасем çине касмалла. Пысăк кастрюле шыв, томат пастипе соусне ярса хутăштармалла, вĕреме кĕртмелле. 2 минута яхăн вĕренĕ хыççăн тăвар, сахăр, тип çу, пăрăç (гвоздика) тата хăяр хушмалла – татах та 7 минут вĕретмелле. Пăтратса тăрса çак хутăш ăшне уксус кислоти ямалла, 5 минут вĕретмелле. Вĕри салата банкăсем ăшне тултармалла. Тимĕр хупăлчапа хупмалла та банкăсене çавăрса лартмалла. Çапла пĕр талăк тытмалла.

Пахчари йăран çинчен

## Хăяр витаминсемпе пуян

**Килти хушма хуçалăхсенче кил хуçи арăмĕсем паян тăрăшсах хăяр татаççĕ. Кăçал нỹрĕкĕ те, ăшши те çителĕклĕ пулнăран хăяр йăтăнать кăна. Телей тесе хаклать çакна ялта пурăнакан. Анчах хăяр уссине эпир йăлтах пĕлетпĕр-и-ха? Сывлăхшăн унăн пĕлтерĕшĕ пысăк-и? Çакăн çинчен пĕлесчĕ хаçатра.**

**К. КАРПЕЕВА.**

Нискасси ял тăрăхĕ.

***Хăярăн тата укропăн сывлăх тĕлĕшпе пур усăллăхĕ пирки хаçат вулакансене районти тĕп больницăн пĕрремĕш категориллĕ пĕтĕмĕшле практика врачĕ В. ГРИГОРЬЕВА каласа парать:***

– Хăяр тĕлĕнмелле тутлă пахча çимĕç пулнипе палăрса тăрать. Вăл çыннăн вар-хырăмĕшĕн йывăр апат мар. Хăярта 95 процент шыв. Çапла вара вăл хырăм ай парĕн ĕçне йывăрлăх кỹмест.

Шывран ытла хăярăн усăллăхĕ мĕнре-ха?

Хăяр выçăлăха хăвăрт ирттерет. Çапла вара куç умĕнчех ỹт-пỹ йывăрăшне пĕчĕклетмелли çул уçăлать: хырăм тутă пек туйăнать, анчах калори сахал.

Хăярти шыв – çут çанталăк адсорбенчĕ. Вăл организмри нумай наркăмăша кăларать. Çавăнпа та наркăмăшлансан хăяр çиме сĕнеççĕ. Куллен хăяр çини организма тасатма, пухăннă наркăмăша кăларма пулăшать. Хăяр шывĕ вĕçĕм ĕçсен ват хăмпинчи чулсенчен хăтăлма пулни паллă.

Хăяр шывĕнче калипе натрий ионĕсем пулни наркăмăшран тасатмалли çула вăй парать. Калипе натрий шайлашăвĕ 17:1 пулни ытти пахча çимĕçсенчен чи пысăкки. Çакă шăк хăвалакан эффекта çемçетет.

Çапла вара хăяр наркăмăшлă япаласене организмран мĕншĕн лайăх тасатса кăларни паллă. Хăярти шыв наркăмăшсене ватать те унăн шăк хăвалас эффекчĕ вĕсене организмран тасатать.

Хăярта калий нумайăи çак пахча çимĕç чĕрепе тымар чирĕсемпе аптăракансемшĕн те усăллă пулнине çирĕплетет.

Эпир паян калаçакан пахча çимĕçре В ушкăнри витаминсем, аскорбин кислоти (С витамин), хаклă йышши минераллă япаласем, тимĕр, кальципе фосфор нумай.

Пĕтĕмĕшле çирĕплетекен хатĕр пек хăяр çини туберкулез чухне тата сывлав çулĕсем чирлесен усăллă. Хăяр апат çинĕ вăхăтра организма белоксене ытларах йышăнма пулăшать. Çавăнпа та хăяр салачĕ ашпа пулă çумне питĕ вырăнлă гарнир. Лайăх апатланма пуçлани вăл – туберкулеза чармалли тĕп çулйĕр.

100 грамм хăярти 3 мкг йод пысăк виçе мар ĕнтĕ, анчах ăна пĕсехе парĕ (щитовидная железа) пĕтĕмпех йышăнать. Çавăнпа та хăяр асăннă орган чирлессинчен питĕ вырăнлă профилактика хатĕрĕ.

Ку пахча çимĕçĕн сывлăх сыхлавĕнчи уссипе пĕрлех косметикăри пĕлтерĕшĕ те пысăк. Вăл ỹте лайăх çемçетет, шуратать, уçăлтарать, хĕвелтен аван хỹтĕлет.

## Укроп: унăн усси

**Килти хушма хуçалăхра укроп ỹстермен çын çуках. Анчах вăл мĕнрен усăллине нумайăшĕ пĕлсех каймасть. Çав шутра эпĕ те. Тухтăрсем ун пирки мĕн шутлаççĕ-ши?**

**И. СИДОРОВ.**

Шупуç ялĕ.

Чăнах та укропа палламан çын çукахтăр. Анчах унăн историйĕ тата пулăшу енĕсем, килĕшетĕп, чылай чух вăрттăнлăхра юлаççĕ.

Укропа 5 пин çул каяллах пĕлнĕ. Авалхи Хĕвел Тухăçĕнче ăна апат-çимĕçре анлă усă курнă. Унпа вĕсем апат тутине лайăхлатнă. Историе шаларах пăхсан вара укропа пур çĕр-шывсенче те нумай çул ĕлĕкрехех пĕлнĕ тата акса ỹстерни палăрать. Укропăн тăван çĕр-шывĕ – Ази.

Укроп – апат-çимĕçре симĕсле усă курмалли ỹсен-тăран. Унăн симĕс тытăмĕнче организмшăн усăллă япаласем питĕ нумай. Тĕслĕхрен: каротин, В тата С витаминсем, тимĕр, фосфор, кальци тăварĕ, никотин кислоти, клетчатка т. ыт. те. Çакнашкал пуянлăха кура укропа тĕрлĕрен çимĕçре усă курма пулать.

**Пĕрремĕшĕ.** Организмшăн усăллă япаласем питĕ нумай тенĕрен вĕсемпе пуянланма укропа тăтăш çимелле. Çу кунĕсенче эпир тĕрлĕ пахча çимĕç çисе кулленех организма витаминсемпе пуянлататпăр. Анчах хĕлле... Çавăнпа та паян укропа тĕрлĕ блюдăсене хушса куллен çиме тăрăшмалла.

**Иккĕмĕшĕ.** Нумай çул ĕлĕкрехех укроппа арçынсене импотенцирен сыватнă. Сыватакансем тĕрлĕ курăк шывĕ хатĕрленĕ чух вĕсен тĕп компоненчĕ укроп пулнă.

**Виççĕмĕшĕ.** Укропра клетчатка пурри сирĕн хырăмлăха кивĕ те пахалăхсăр апатран тасатать. Апатланма вăхăт сахал пулнипе çынсем çул çинче бутербродпа кăна хăйсене «улталаççĕ» пулсан, вĕсен пулас чир-чĕрне ура хураканни шăпах укроп пулать те. Кун пек чухне сире вар-хырăм тав тăвĕ кăна.

**Тăваттăмĕшĕ.** Эсир апатлануra тăтăш укроппа усă куратăр пулсан сирĕн организмри микрофлорăна ăмсанмалли кăна юлать.

**Пиллĕкмĕшĕ.** Вар-хырăм тракчĕ чирленĕ чух укроп уйрăмах усăллă.

**Улттăмĕшĕ.** Чĕре чирĕсем аптăратнă чухне те укроп сирĕншĕн çут çанталăкăн чăн-чăн эмелĕ пулĕ.

**Çиччĕмĕшĕ.** Укропăн паха енĕсене пула сирĕн чăркăшлăх иртĕ, хăвăра лăпкăрах туйăр. Енчен те сирĕн нерв системи хавшакрах пулсан уйăх хушши куллен кăштахшар укроп çиме ан ỹркенĕр.

**Саккăрмĕшĕ.** Ку ỹсен-тăран сосудсене сарать, юн пусăмне пĕчĕклетет.

**Тăххăрмĕшĕ.** Суранлансан, ỹте касса ярсан, алă-ура хуçсан, язвăсемпе аптăранă вăхăтсенче укропа çине тăрсах хăвăр апат-çимĕçе кĕртме сĕнетĕп. Укропри витаминсем сирĕншĕн пысăк тĕкĕ пулĕç.

Вуннăмĕшĕ. Укроп – шăк хăвалакан хатĕр пулнăран çакна валли эмелсемпе уколсем вырăнне те асăннă ỹсен-тăранпа усă курма сĕнетĕп.

Укроп пирки вулакана тĕплĕн каласа патăмăр ĕнтĕ. Анчах та çак ỹсен-тăранран асăрханмалли вăхăт та пур. Ача çуратма хатĕрленекен йывăр хĕрарăмсене укропа пысăк виçепе çиме юрамасть.

# Сывлăх вăрттăнлăхĕ – кишĕрте

Йăран çинчен – сĕтел çине

Пĕлетĕр-и эсир сывлăхлă та хитре пулас тесен мĕн чуль кишĕр çимеллине? Диетологсем тĕпченĕ тăрăх – çулталăкра сахалтан та 11–15 килограмм. Анчах та çак цифрăсемпе те çырлахмалла мар. Кишĕр сĕткенĕ те, кишĕр варенийĕ те пирĕн сĕтел çинче пулмалла. Кишĕртен хатĕрленĕ маскăсемпе усă курсан та лайăх.

Кунсерен 100 грамм кишĕр çини иммунитета вăйлатма тата ỹте лайăхлатма пулăшать. Кишĕр ăшне кăштах тип çу ярсан унти бета-каротин А витамина хăвăртрах куçать.

Кишĕр, петрушка тата хĕрлĕ кăшман сĕткенĕсене 2:2:1 пропорципе илсе хутăштарса кунсерен пĕр стакан ĕçсен куç лайăхрах курать. Çак хутăш сирĕн пыршăлăхшăн йывăр апат шутланать пулсан ăна шывпа шĕветме те юрать.

Ỹт е тата çỹç те типписен йышне кĕреççĕ пулсан эрнере 2–3 хут кишĕр сĕткенне ĕçмелле тата кишĕртен хатĕрленĕ маскăсем тумалла. Сăмахран, 1-шер апат кашăкĕ хăйма, тăпăрч тата кишĕр сĕткенне хутăштармалла та таса та типĕ ỹт çине 15 минутлăх сĕрмелле.

Çỹç çуталса тăтăр тесен вара çак маскăпа усă курма юрать. Ăна хатĕрлеме 4 апат кашăкĕ чухлĕ кишĕр сĕткенĕ, 2-шер апат кашăкĕ лимон сĕткенĕпе хупах çăвĕ кирлĕ. Пурне те хутăштарса пуç тата çỹç çине сĕрмелле, ăшă тытакан хатĕрпе пуçа çур сехетлĕх çыхса хумалла.

Кишĕрпе цитруссенчен варени те хатĕрлеме пулать. 1 лимон, 1 апельсин, çур килограмм кишĕр тата çур килограмм сахăр кирлĕ. Кишĕре шултра терка витĕр, лимонпа апельсина хуппипех аш арманĕ витĕр кăлармалла. Вĕсене хутăштармалла, сахăр хушмалла. Кирлĕ пулсан кăшт шыв яма юрать. Вĕреме кĕнĕ хыççăн тепĕр çур сехет пĕçермелле. Варени хатĕр те.

Кишĕре тĕттĕм вырăнта усрамалла, çиес умĕн çеç çумалла. Унсăрăн вăл хăйĕн витаминне çухатать. Лавккари сентресем çинче выртакан çуса тасатнă кишĕр, шел пулин те, организма нимĕнле усă та памасть.

# Эсир шăл тасатма пĕлетĕр-и?

**Врач канашĕ**

***Çак ыйтăва çамрăка е тата аслă ÿсĕмри çынна хуравлама ыйтсан вĕсем паллах тĕлĕнĕç: «Мĕн пĕлмелли пултăр-ха унта? Шăл тасатмалли щетка çине паста хур та тасат». Анчах та çамрăксемпе ачасен 88 процентĕ е тата тĕлĕнмеллерех – ашшĕ-амăшĕсен 87 процентĕ таранах шăлсене тĕрĕс тасатма пĕлменни паллă. Хăшĕсем вара – ачасен 7 процентĕ тата ашшĕ-амăшĕсен 9 процентĕ – пачах та шăлсене пăхса тăмаççĕ!***

Çакă пĕтĕмпех – ачаранах гигиена тасалăхĕ пирки вĕренсе пыманнинче. Тĕрĕслех каласан – вĕрентменнинче. Шăлсене пăхса тăма ачасене 2–3 çултанах вĕрентсе, хăнăхтарса пымалла.

Кариес пуçланассин хăрушлăхĕ ытларах шăл çинче пухăнакан микробсенче. Вĕсем эмале тата шăл тĕпне пысăк сиен кÿреççĕ.

Шăл çинчи тусана (налет) пĕтерес тесен шăлсене кунне иккĕ тасатмалла: ирпе апатланнă хыççăн тата каçпа çывăрас умĕн, 3–4 минут. Мĕнле май килнĕ çапла мар, шăлсене пур енчен те тĕплĕн тасатмалла. Щеткăпа шăл çинче çавракка тунă евĕр хусканусемпе шăлса тасатнă пек тасатмалла. Шăл тасатнă чухнех унăн тунисене те сăтăрса çемçетме манмалла мар. Чĕлхене те тасатмалла. Апатланнă хыççăн кашнинчех çăвара шывпа чÿхесе илмелле, шăл хушшине юлнă апат юлашкийĕсене шăл шăрпăкĕпе (булавкăпа, йĕппе е ытти япалапа мар!) кăлармалла.

Шăл тасатмалли щеткăна виçĕ уйăхран улăштарса тăмалла. Щеткăн тасатмалли пайĕ пысăк пулмалла мар. Щетка çинчи синтетикăран хатĕрленĕ шăртсем те ытла хытă ан пулччăр тата вĕсен вĕçĕсем çавра пулмалла.

Шăлсем мĕнле пулассси апатланнинчен те нумай килет. Кариес сахăр мĕн чухлĕ тата тăтăш çинине тÿрремĕнех пăхăнса тăрать. Пылак апатăн юлашкийĕсем шăл çинче 35–40 минут тытăнса тăнă хыççăн уйрăмах пысăк сиен кÿреççĕ.

Çапла ан пултăр тесен виçĕ правило асра тытмалла тата вĕсене пăхăнмалла.

Пĕрремĕшĕ: çывăрас умĕн пылак ан çийĕр. Иккĕмĕшĕ: ирхи, кăнтăрлахи тата каçхи апатлану хушшинче канфет е пирожнăй ан çийĕр, вĕсем вырăнне кишĕр кăшласан лайăхрах. Виççĕмĕшĕ: апатланнă хыççăн та пылак çимеçĕ мар, пан улми, апельсин, грейпфрут е кишĕр çийĕр. Пахча çимĕçпе улма-çырла çăвара пылак апат-çимĕç юлашкийĕнчен тасатма пулăшаççĕ.

Ачаранпах пирĕн организмри чăмламалли аппарата активлă ĕçлеттерекен çимĕç çиме тăрăшмалла. Хăшĕсем чăмлама ÿркенеççĕ: çăкăрăн хытă пайне çимеççĕ, çемçине çеç, тураса вакланă какай таткисене мар, авăртнă какай çиме тăрăшаççĕ тата ыттине те. Çапла майпа чăмлама пулăшакан мышцăсем хăйсен пур вăйĕпе ĕçлемеççĕ. Вĕсен чирсемпе кĕрешес вăйĕ те пĕтсе пырать. Чăмлама ÿркенни ачасем пÿрне е чĕлхе ĕмнипе, чĕрне кăшланипе, тутана çулланипе, пĕчĕк чухне пĕрмай пустышка ĕмнипе палăрать. Çакă вара янах шăммине



тĕрĕс мар аталантарать, шăлсем те йĕркеллĕ ÿсмеççĕ, шăл тымарĕсем те хавшаççĕ. Çавăнпа та ачасене пĕчĕкренех гигиена тасалăхне хăнăхтармалла, сиенлĕ йăласемсĕр пурăнма вĕрентмелле.

Аслисем пирки калас пулсан вĕсем эрех-сăра ĕçни тата пирус туртни шăл, шăл тымарĕсем тата çăварти ламака сийĕ çинче питĕ витĕмлĕ палăрса тăраççĕ. Çакăн пек çынсен шăл çинче тĕксĕм тусан (налет) пухăнать. Вăл çăмăллăнах кариес пуçарать. Апла пулсан шăлсем сывă пулассси эпир мĕнле пурăннинчен те нумай килет.

**В. ПАВЛОВА,**
**ача-пăча стоматолог врачĕ.**

**Милици хроникинчен**

## Хĕрарăмсем ĕçсĕр аптăранă

Çуллахи çанталăк кăçал çумăрне те, ăшшине те шеллемест. Пахча çимĕç шăварса аппаланмалла та мар. Апла пулсан пушă вăхăт та ытларах. Йĕрĕхкассинче тата Очăкассинче пурăнакан хĕрарăмсем те акă ĕçсĕр аптăранăран-ши пахчара вăй виçсе пăхнă. Вăйлăраххи теприне сăмахпа кăна мар, патакпах хĕненĕ.

Чăннипех те патак «ситернĕ» хыççăн уголовлă ĕç пуçарма пултарассине шутламан мĕн Очăкассинчи «амазонка». Хăйĕн вара ăна та тутанса пăхма тивĕ.

## Ют пурлăх илĕртет çав

Коллективлă садсенче улма-çырла йывăççи нумайăшпе пĕрлех пушă дача çурчĕсем те чылай. «Таркăнсене пытанса çÿреме, йĕрке пăсакансемшĕн меллĕ вырăн кăна тăрса юлнă хăшĕсем», – çынсем дача çурчĕсене пирки çапла калаçнине пĕрре мар илтме тивнĕ.

Унти улми-çырлине çывăхри ялсенче пурăнакансем «тирпейлесе тăнине» пурте пĕлеççĕ-ха. Çын пурăнман çуртсенчи пурлăхпа интересленекен те сахал мар иккен.

Акă Шомик çывăхĕнчи коллективлă садри пĕр дача çуртне те кĕтмен хăна килнĕ. Кунта вара сварка аппарачĕ те, тимĕр хатĕр те чылай пулнă, 300 метр тăршшĕ пăхăр пралук та... Вăрă пĕтĕмпех пустарса тухса кайнă. Халĕ ку тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарассипе следстви пырать.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

# Шăрăха мĕнле чăтса ирттермелле?

***Çитес кунсенче синоптиксем шăрăх çанталăк пулассине пĕлтереççĕ. Вĕсен пĕлтерĕвне шута илсе шăрăхпа мĕнле «туслашмаллине» те тишкерер-ха.***

**КИЛТЕ**

Чÿречесем çине сутă тĕслĕ штора çакмалла. Кантăксене апат-çимĕç хатĕрлемелли фольгапа çыпăçтармалла е халĕ тата чÿрече кантăкĕ валли ятарлă фольга та сутаççĕ.

Сутура «климат-контроллĕ» чÿречесем те пур. Чÿречесене улăштарас тетĕр пулсан çавсене туянăр. Вĕсем çулла ытлашши ăшă кĕртмеççĕ, хĕлле вара пÿлĕмри ăшша аван тытаççĕ.

Пÿлĕмсене ирпе тата каçпа уçăлтарăр. Ун чухне сывлăш уçăрах. Кăнтăрла вара хупă тытăр.

Пÿрт урайĕ çинчи кавирпаласене пуçтарса хурăр. Килте çара уран çÿреме пултаратăр.

Пÿлĕмре пăчă ан пултăр тесе нÿрĕ япаласем типĕтме çакăр е шыв тултарнă савăт лартăр пулсан та асăрханмалла. Ытла нÿрĕ сывлăша пирĕн организм шăрăхран япăхрах чăтса ирттерет.

Ирпе вырăн тавраш хывса илсе хутаçна холодильника хума та пултаратăр. Çывăрас умĕн кăларса сармалла та канлĕ çывăрма выртмалла çеç. Темĕнле шăрăх пулсан та çÿхе çивиттипе витĕнмеллех.

**УРАМРА**

Шăрăх çанталăкра ирпе сивĕрех шывпа çăвăнмалла. Çăвăннă хыççăн шăлăнмалла мар. Шыв тумламĕсем ÿт çинче типчĕр.

Ирхи апат çăмăл пулмалла. Улма-çырла, пахча çимĕç, çусăр сĕт продукчĕсем, çăмарта, сĕлĕ пăтти, сивĕ (сивĕнни мар, рецептпа сивĕ яшка шутне кĕреççĕ) яшкасем çиме тăрăшмалла.

Ытларах ĕçмелле. Кĕлеткене кура кунне 2–3 литр шыв ĕçмелле. Шыв ĕçнĕ чух унта пĕрре пиллĕкмĕш пайĕ чухлĕ лимон сĕткенне хушăр. Шăрăхра симĕс чей, уйран, клюква çырлинчен хатĕрленĕ морс, лимон сĕткенĕпе хутăштарнă шыв тата типĕтнĕ улма-çырла ярса вĕретнĕ компот ĕçме сĕнеççĕ. Сивĕтнĕ пылак напитоксемпе тата сăрапа ан иртĕхĕр. Вĕсем калорипе пуян, çавăнпа та шăрăхра организма çавăн чухлĕ калорие пăрахăçлама йывăр пулать. Квасра мороженăй пирки те çакнах каламалла.

Çи-пуç (синтетика материалĕнчен çĕлени мар!) ÿт çумне çыпăçса ан тăтăр. Хул пуççисем уçă пулсан çÿхе тутăр е шарф хума та пулать. Шĕлепке тăхăнни вырăнлă.

Хĕвелтен хÿтĕлекен лайăх куçлăх туянăр.

**ĔÇ ВЫРĂНĔНЧЕ**

Рассейри офис çурчĕсем, уйрăмах патшалăх учрежденийĕсем, уçă сывлăш çитменнипе тата унта пăчă пулнипе палăрса тăраççĕ. Ытларах чух офиссенче урайĕнче ларакан пĕр-икĕ вентилятор çеç курма пулать. Çакна вырăнти электросете пырса тивекен ĕç тиевĕпе çыхăнтараççĕ.

Врачсем вара пăчă пÿлĕмре ĕçлекенĕн ĕçлеме пултараслăхĕ 10–15 процент чакнине калаççĕ.

Пĕлтерхи шăрăх вăхăтра та акă (ыйтăмсем тăрăх) ĕç паракансен пĕрре виççĕмĕш пайĕ çеç ĕç пÿлĕмĕсенче кондиционер е вентилятор вырнаçтарнă.

Рассей Федерацийĕнче çирĕплетнĕ санитари правилисемпе нормисенче вара производство пÿлĕмĕсенчи микроклиматăн гигиена тĕлĕшĕнчи требованийĕсем пирки те уйрăммăн çырса пани пур (СанПин 2.2.4.548-96). Унта çырса панипе килĕшÿллĕн çуллалăкăн ăшă тапхăрĕнче ĕç пÿлĕмĕнчи сывлăш температури 18–25 градуспа танлашмалла, 15–28 градус – юрать. Термометр 29 градусран ăшăрах кăтартать пулсан ĕç кунĕ пĕр сехет кĕскелмелле, 30 градус – икĕ сехет... Анчах та Ĕç кодексĕн 379 статйине шута илсе ку ыйтупа сирĕн малрах ĕç паракан патне тухмалла (коллективпа лайăхрах та).


**Пĕлтерÿсем. Объявления**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 5-5.**

**РЕМОНТ И ОБСЛУЖИВАНИЕ КОМПЬЮТЕРОВ**
**Установка, переустановка ОС, настройка, удаление вирусов, sms-блокеров, восстановление информации, выезд на дом, без выходных. Тел.: 8-906-386-93-47.**

* * *

**Продаем комбикорма. Доставка. Тел.: 8-927-992-05-19. 1-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 4-9.**

* * *

**Реализуем песок речной, щебень разных фракций по низким ценам. Возможна доставка.**
**Тел.: 8-937-384-06-50. 10-12.**

* * *

**Ремонт холодильников: торговых, бытовых. Гарантия. Тел.: 8-905-345-06-48. 5-6.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63. 4-7.**

* * *

**ОАО «Ядринмолоко» требуются грузчики (зарплата от 13000 руб.). Предоставляется общежитие, полный соц. пакет. Тел. для справок: (83547)23-8-42. 2-2.**

* * *

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича, керамзитоблоки, с доставкой. Тел.: 67-66-95, 8-905-347-99-15. 1-5.**

* * *

**Требуются каменщики в Нижегородскую область. Оплату гарантируем.**
**Тел.: 8-902-306-94-05, 8-953-899-90-04.**

* * *

**Ултă уйăхри ăратлă качака путекки сутатăп.**
**Тел.: 8-902-661-20-74.**

* * *

**В мебельный салон в с. Моргауши требуется грузчик-сборщик мебели, можно по совместительству.**
**Тел.: 8-917-679-87-61.**

* * *

**Продаю косилку КСП-2.1, новую. Тел.: 8-961-340-55-68.**

* * *

**Продаю пропаренные качественные керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу, керамзит, цемент. Требуются рабочие для производства керамзитобетонных блоков. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 1-5.**

**Продаем доски: обрезные, необрезные, брус любого сечения, срубы из оцилиндрованного бревна. Доставка бесплатно.**
**Тел.: 8-919-679-18-11, 8-927-859-91-55. 5-5.**

**Спутниковые антенны от 4000 руб.**
**Установка, гарантия.**
**Тел.: 8-905-345-77-19. 4-6.**

**Продаем: профнастил – 260 руб./м., профиль – 60 руб./м., трубы – 140 руб./м., банная печь – 10500 руб., доски обрезные – 6400 руб./куб.м. Всегда низкие цены. Доставка по району. Тел.: 8-927-848-84-30. 4-5.**

**Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки.**
**Тел.: 8-927-668-70-15. 8-13.**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок.**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень.**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 25-50.**

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30.
З/п от 25000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 3-3.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам:
8-9603101816
скидки до 35%
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...


| | суббота 23 июля | | | | воскресенье 24 июля | | | | понедельник 25 июля | | | | вторник 26 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +17 | +24 | +27 | +21 | +17 | +26 | +29 | +23 | +20 | +28 | +31 | +25 | +21 | +30 | +33 | +26 |
| Давление мм | 749 | 750 | 749 | 749 | 749 | 750 | 749 | 749 | 749 | 751 | 750 | 750 | 751 | 752 | 751 | 751 |
| Влажность % | 85 | 60 | 47 | 67 | 86 | 58 | 44 | 79 | 81 | 58 | 43 | 67 | 79 | 52 | 37 | 72 |
| Ветер | Ю | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю | В | Ю | Ю-В | Ю-В | Ю | Ю | Ю-В | Ю | В | ШТЛ | Ю-В |
| м/с | 1 | 2 | 3 | 4 | 1 | 1 | 2 | 2 | 2 | 1 | 2 | 2 | 1 | 1 | 0 | 1 |
| Солнце восход/заход | | 04:40 | 21:18 | | | 04:42 | 21:16 | | | 04:43 | 21:14 | | | 04:45 | 21:12 | |
| Луна восход/заход | | 23:13 | 14:27 | | | 23:36 | 15:37 | | | - | 16:46 | | | 00:08 | 17:49 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.**
**Пичете панă 22.07.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4282.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.